Ачасен çуллахи канăвĕпе сывлăхĕ

# Путевка ăçта туянмалла?

***Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2009 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн каникул вăхăтĕнче ачасен сывлăхне лагерьсенче çирĕплетес ĕçе пурнăçласси муниципаллă районсен тата хула округĕсен администрацийĕсен тивĕçĕ пулса тăрать. Пирĕн районта пурăнакансен хăйсен ачисене çуллахи вăхăтра сывлăха çирĕплетекен лагерьсене вырнаçтарас ыйтупа ăçта, хăш специалист патне пымалла-ха? Ыйту çине хурав илес тесе район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертсе пыракан специалистне А.Н. ДАНИЛОВАНА калаçăва чĕнтĕмĕр. Мĕншĕн тесен район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи 211 № йышăнăвĕпе çӳлерех асăннă тивĕçсене пурнăçлакан ятарлă орган çирĕплетнĕ. Вăл вара шăпах вĕренӳ пайĕ пулса тăрать.***

– Район пуçлăхĕн «2010 çулта ачасемпе çамрăксен канăвне, сывлăхне çирĕплетесси тата ĕçне йĕркелесси çинчен» йышăнăвĕпе ведомствăсем хушшинчи муниципаллă комиссие те, ĕçе пурнăçлакан органа та çирĕплетнĕ. Çапла майпа çулла ачисене лагере ярас текен ашшĕ-амăшĕн заявление район администрацийĕн вĕренӳ пайне çырса памалла. Заявленисем тăрăх эпир путевка туянас текенсен базине йĕркелетпĕр. Путевкăсене вара черет мелĕпе заявлени çырнă куна пăхса парассине тĕпе хуратпăр.

**– Путевка хакĕ епле пуласси паллă-и?**

– 2010 çулта хуласем тулашĕнчи ача-пăча сывлăхне çирĕплетмелли лагерьсене кайма путевкăсем туянма 2032800 тенкĕ уйăрса параççĕ. Çуллахи сменăра лагерьте канма пĕр путевкăн чи пысăк хакĕ 7700 тенкĕпе танлашать. Анчах хăраса ӳкме кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен ашшĕ-амăшĕн путевка хакĕн 10 процентĕ чухлĕ çеç тӳлеме тивĕ. Ытти 90 процентне ĕçе пурнăçлакан орган тӳлет. Ашшĕ-амăшĕн вара лагерьти смена пуçланнă хыççăн 5 кунран кая юлмасăр çак суммăна тӳлесе татмалла. Укçана лагерĕн кассине памалла пулать.

**– Заявленисене хăçанччен çырса памалла?**

– Заявленисене ашшĕ-амăшĕнчен е саккунлă представительсенчен апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса йышăнма пуçларăмăр. Çак тапхăр майăн 28-мĕшĕччен тăсăлать.

**– Ытти çулсенчи пек çуллахи вăхăтра шкулсем çумĕнче лагерьсем йĕркеленĕç-и тата?**

– Комиссие заявка тăратни тăрăх, ачасен сывлăхне çирĕплетмелли лагерьсем вĕренӳ учрежденийĕсем çумĕнче кăçал та пулаççĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче çакнашкал лагерьсен смени 21 кунпа танлашать, çуркуннехи, кĕркуннехи тата хĕллехи каникулсем вăхăтĕнче 7 кунран сахал пулмалла мар. Ачасене апатлантарма республика бюджетĕнчен пĕр ача пуçне 55 тенкĕ, вырăнти бюджетран 30 тенкĕ куçарса параççĕ. Ку вăл пĕр ачан пĕр кун апатланмалли сумма. Лагерьсене йĕркелесе ачасене лайăх апатлану туса пама (1-9 классенче вĕренекенсем валли) çапла майпа Муркаш районне 732300 тенкĕ уйăрса панă. Кашни шкулăн хăйĕн сумми пулать, мĕншĕн тесен укçа-тенкĕ уйăрасси лагерьте миçе ача пулнипе çыхăннă.

**– Апла пулсан кашни шкултах çуллахи вăхăтра лагерьсем ĕçлесси халех паллă тесен йăнăш пулмасть пулĕ?**

– Çак çĕнĕлĕх кашни шкултах çуллахи вăхăтра лагерьсем йĕркелеме май парать. Ачана шкулти лагере çӳретме ашшĕ-амăшĕн шкул администрацине заявлени çырса памалла. Заявленисене майăн 28-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Лагерьсене санитарипе эпидемиологи пĕтĕмлетĕвĕ тивĕçлĕ пулнине шута илсе уçма ирĕк пур. Шкул çумĕнчи лагерьсенче ачасене кунне икĕ хут вĕри апатлану йĕркелесе параççĕ.

**– 14 çул тултарнă тата унран аслăраххисене валли çуллахи вăхăтра ĕçпе кану лагерĕсем е ĕç бригадисем йĕркелеме палăртнă-и?**

– Паллах, çак ӳсĕмрисене те айккинче тăратса хăвармастпăр. Ĕçпе кану лагерĕсемпе ĕç бригадисем пулмалла. Муниципаллă бюджетран çак ĕçе пурнăçлама 250000 тенкĕ уйăрса панă. Тата каласа хăвармалла, йывăр лару-тăруллă çемьесенче ӳсекен ачасем çине тимлĕх ытти чухнехи пекех ытларах уйăрăпăр. Ыйтусем пулсан вара 62-0-92 е 62-4-33 номерсемпе шăнкăравлама пултаратăр.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

Спорт тата сывă пурнăç йĕрки

# Пысăк спорта – массăллă ăмăртусем урлă

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Районта спортăн тĕрлĕ енĕсене аталантарма федерацисем йĕркеленни пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе те паллаштарчĕç федераци ертӳçисем. Хоккей федерацийĕн ертӳçи В.И. Кожанов (районти вĕренӳ пайĕпе пĕрле) спортăн çак енне районта аталантарма пысăк тӳпе хывнисене укçан парнесем тата грамотăсем парса хавхалантарнине пурте алă çупсах йышăнчĕç.

Район пуçлăхĕ спортпа физкультурăна аталантарас ĕçе пĕтĕмлетсе активлăхпа палăрнисене Хисеп грамотисем парса чысларĕ. Малашне вара Юрий Александрович халăхра физкультурăпа спорта аталантарас тата сывă пурнăç йĕркине сарас тĕлĕшпе пур ертӳçĕне те спорта юратакансемпе, пуçаруçăсемпе тачă çыхăнса ĕçлеме сĕнчĕ. Çамрăк специалистсене çак ĕçе явăçтарас тĕллевпе вĕсене хавхалантармалли майсем шырама, спорт сооруженийĕсемпе каçхи вăхăтра та яваплă çынсене çирĕплетсе туллин усă курма, унта çӳремелли графиксем хатĕрлемеллине те каларĕ вăл. Ăмăртусем ирттернĕ чухне вара анлă сарăлнă «подстава» сăмаха манма хушрĕ. Спорта кăмăллакансемпе спорт маçтăрĕсем ăмăртни килĕшӳллĕ те мар çав. Тăван районта физкультурăпа спорта аталантарас тесен вырăнти командăсемпе, ял халăхĕпе ытларах ĕçлес пулать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Хоккейпа туслашрĕç

Вăхăт ӳкĕте кĕртмелле мар малалла чупать. Тин кăна тавралăх шурă кавирпе витĕнчĕ пек, пăхатăн та, юр ирĕлсе те пĕтет. Ăшă илсе килекен çуркуннене кашниех питĕ хавас, анчах савăнăçлă хĕл кунĕсемпе сыв пуллашма та шел.

Иртнĕ хĕл кунĕсем Сыпай тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн уйрăмах асра юлмалла иртрĕç. Ачасем те, аслисем те коньки çине тăрса вăхăта сывлăхшăн усăллă ирттерчĕç. Уйрăмах Сыпай шкулĕнче вĕренекенсен хоккей команди ӳсĕмсем тума пултарни савăнтарчĕ. Арçын ачасем районти ăмăртура 2 вырăна, Орининти шкул командипе пĕрле республикăри зона ăмăртăвне хутшăнса, 3 вырăна тухма пултарчĕç. Аслăраххисене кура кĕçĕн классенче вĕренекенсем те хоккейла выляма хăнăхрĕç. Ушкăн-ушкăн пухăнса ялта пурăнакансене савăнтармалла маттур вылярĕç.

Иртнĕ хĕлле хоккейпа туслашнăран, ăна пăр çинчех ăсатма шутларăмăр. Çапла вара пуш уйăхĕ вĕçĕнче Сыпай тăрăхĕнче пурăнакансем пăр çине йышлăн пухăнчĕç. Кунта Сыпай ялĕн хоккей командипе Калмăк ялĕн команди пăр хупнă ятпа юлташла тĕл пулăва тухрĕ. Пухăннисемшĕн аслисем вылянине пăхма уйрăмах интереслĕ пулчĕ. Шел пулин те, Сыпайсем 7:9 шутпа выляса ячĕç, анчах çуркуннехи хаваслă кăмăла ку хуçма пултараймарĕ. Вылякансем те, куракансем те килелле çĕкленӳллĕ кăмăлпа саланчĕç.

Сывă пул, хĕллехи хаваслă вăхăт! Тепĕр çулччен! Çитес хĕлле те пăра хамăр айран ямăпăр!

**Н. ЯКОВЛЕВА, Сыпай шкулĕнче вĕрентекен.**

Çамрăксем тата вĕренӳ

# Академире шкул ачисене чысларĕç

Апрелĕн 3-мĕшĕнче Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче «Уçă алăксен кунĕ» иртрĕ. Кунта пулас студентсем академири факультетсемпе паллашрĕç, Ял хуçалăх тата Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерствисен представителĕсене те тĕл пулчĕç.

Маларах çак вĕренӳ заведенийĕ ирттернĕ конкурссемпе олимпиадăсенче тата викторинăсенче мала тухнисене те çак кунах чысларĕç. Пирĕн районти шкул ачисем те призерсен йышне пулни савăнтарать. Турай шкулĕнче вĕренекен Оксана Михайловна биологипе иртнĕ олимпиадăна активлă хутшăннăшăн Хисеп грамоти парса палăртрĕç. Чăвашла çырнă сочиненисен конкурсĕнче вара Çатракасси шкулĕнче вĕренекен Светлана Филиппова 3-мĕш вырăна йышăнма пултарнă. Ăна та дипломпа парне парса хавхалантарчĕç. Унăн вĕрентекенне Э.Д. Ярикована та Тав хучĕ пачĕç. Муркаш лицейĕнче вĕренекен Светлана Иванова вара «Манăн пулас професси – ветеринари врачĕ» викторинăра 3-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Ăна дипломпа парне парса хавхалантарнипе пĕрлех унăн вĕрентекенне Р.В. Ивановăна та Тав хучĕ парса саламларĕç.

**А. ДАНИЛОВА, районти вĕренӳ пайĕн специалисчĕ.**

Спорт

## Шахматла выляма

Ĕç коллективĕсен спартакиадин шучĕпе апрелĕн 10-мĕшĕнче шахматла выляссипе ăмăрту иртет. Унта районти ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен тата ял тăрăхĕсен командисене чĕнеççĕ. Командăра 3 арçынпа 1 хĕрарăм пулмалла. Ăмăрту район администрацийĕн методика пӳлĕмĕнче 10 сехетре пуçланать.

## Ăмăртусем çапла вĕçленнĕ

Иртнĕ эрнере шашкăлла выляканссем хушшинче мала тухнисем вара çаксем пулнă: 1-мĕш вырăнта – «Оринино», 2-мĕш вырăнта – Муркаш районĕн команди, 3-мĕш вырăнта – районти шалти ĕçсен пайĕ.

Апрелĕн 2-3-мĕшĕсенче шкул ачисем хушшинче волейбол ăмăртăвĕсем иртрĕç. Хĕрсен командисем хушшинче те, яшсен командисем хушшинче те Орининти вăтам шкулта вĕренекенсем çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă. 2-мĕш вырăнсенче – Мăн Сĕнтĕр (хĕрсем) тата Муркашри (яшсем) вăтам шкулсем. Муркашри лицейра вĕренекен хĕрсен команди те, яшсен команди те 3-мĕш вырăна тухнă.

Редакци почтинчен

# Тавах шур халатлисене

Эпĕ чĕре чирĕпе йывăр аптăраса ӳкрĕм. Васкавлă пулăшу чĕнмех тиврĕ. Мана Муркашри тĕп больницăри терапи уйрăмне вырнаçтарчĕç. Пулăшу пачĕç. Кайран çапах та реанимаци уйрăмĕнче выртма тиврĕ. Ман пурнăçшăн тăрăшнă врачсене, медицина сестрисене, санитаркăсене тата апат çитерекенсене пуç тайса тав сăмахĕ калатăп. Пурте питĕ вашават, кăмăллă. Эпĕ вăтă тесе пĕри те манпа калаçмасăр тăмарĕ.

Шур халатлă çынсене курсан нимĕн те ыратман пекех туйăнса каятчĕ, чирĕ хăйĕнех тăвать пулин те. Çулĕсем те чылай çав. Манăн пурнăçа тата тепĕр кăшт тăсма пулăшнăшăн васкавлă пулăшу уйрăмĕнче ĕçлекенсене те тав тăватăп. Пурне те сывлăх сунатăп.

**Тамара ШИШКОВА.**

Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-5.

Продаю семена чернушки и «штутгарден», лук. Цена договорная. Тел.: 8-903-358-82-34. 3-5.

ОАО «Птицефабрика «Моргаушская» реализует с 6 апреля 2010 года куры-несушки кросса «Хайсекс белый»: 9 мес. возраста по цене – 100 руб, 18 мес. возраста по цене – 50 руб. Ежедневно с 8-00 до 16-00 часов, кроме воскресенья. Тел.: 65-2-48. 2-2.

Продается двухкомнатная квартира со всеми удобствами в д. Москакасы. Индивидуальное отопление. Тел.: 8-902-661-23-17. Галина.

Продаю однокомнатную квартиру в центре с. Моргауши. Цена договорная. Тел.: 8-927-851-16-87.

9 апреля с 9-00 до 18-00 часов в районном Доме культуры состоится выставка-продажа обуви из натуральной кожи производства Ульяновской, Белорусской фабрик (весна – лето). Пенсионерам – скидки.

Пĕрре пăрулană хĕрлĕ ĕне сутатăп.
Тел.: 8-906-136-43-20.

Вăкăрсем, пăрусем, сурăхсем туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.

Участник долевой собственности Максимов Михаил Нестерович, 31.10.1965 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Советская, д. 22, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Дружба», участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.
Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Максимову Михаилу Нестеровичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Советская, д. 22.

Участник долевой собственности Назаров Андрей Кириллович, 01.08.1928 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Советская, д. 99, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ильинское, на территории землепользования СХПК «Волга», участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:031001 площадью 1,34 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.
Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ильинского сельского поселения.
2. Назарову Андрею Кирилловичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Советская, д. 99.

Участники долевой собственности Пагеев Валерий Олегович, 10.12.1982 года рождения, в 1/4 доле, Пагеев Николай Олегович, 23.04.1984 года рождения, в 1/4 доле, Пагеев Михаил Олегович, 22.12.1985 года рождения, в 1/4 доле, Пагеев Владимир Олегович, 25.02.1987 года рождения, в 1/4 доле, проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хундыкасы, ул. Юркино, д. 19, сообщают о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ильинское, на территории землепользования СХПК «Хлебороб», участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:021001 площадью 1,24 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.
Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ильинского сельского поселения.
2. Пагееву Валерию Олеговичу, Пагееву Николаю Олеговичу, Пагееву Михаилу Олеговичу, Пагееву Владимиру Олеговичу, проживающим по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хундыкасы, ул. Юркино, д. 19.

Участник долевой собственности Иванов Валерий Николаевич, 24.06.1964 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Тиуши, ул. Чебоксарская, д. 15, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, на территории землепользования СХПК им. Мичурина, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.
Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Иванову Валерию Николаевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Тиуши, ул. Чебоксарская, д. 15.

Участница долевой собственности Иванова Елена Ивановна, 27.02.1973 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Тиуши, ул. Чебоксарская, д. 15, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, на территории землепользования СХПК им. Мичурина, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.
Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Ивановой Елене Ивановне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Тиуши, ул. Чебоксарская, д. 15.

Участница долевой собственности Семенова Зоя Семеновна, 15.03.1938 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Обрыскино, ул. Молодежная, д. 15, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, на территории землепользования СХПК им. Мичурина, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.
Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Семеновой Зое Семеновне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Обрыскино, ул. Молодежная, д. 15.

Участник долевой собственности Белов Вячеслав Аркадьевич, 02.02.1954 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 22, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Сятракасинское, на территории землепользования СХПК им. К. Иванова, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:230201 площадью 1,08 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.
Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Сятракасинского сельского поселения.
2. Белову Вячеславу Аркадьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 22.

Участница долевой собственности Белова Мария Александровна, 18.03.1949 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 22, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Сятракасинское, на территории землепользования СХПК им. К. Иванова, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:230201 площадью 1,08 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.
Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Сятракасинского сельского поселения.
2. Беловой Марии Александровне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 22.

Участник долевой собственности Белов Петр Вячеславович, 03.01.1977 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 20, кв. 4, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Сятракасинское, на территории землепользования СХПК им. К. Иванова, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:230201 площадью 3,24 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.
Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Сятракасинского сельского поселения.
2. Белову Петру Вячеславовичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 20, кв. 4.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1191, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:072501, для ведения прудового хозяйства, площадью 85650 кв. м.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

За главного редактора В.Л. ШАПОШНИКОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 06.04.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3980.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.